• *Аса илӳ*

# Манăçми тĕл пулусем

Çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче РСФСР Писательсен союзĕн председателĕ пулнă поэт-юптаруçă, драматург, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи çар корреспонденчĕ, Совет Союзĕн тата Раççей Федерацийĕн Гимнĕсен тексчĕсен авторĕ Сергей Михалков 97 çула çитсе çĕре кĕчĕ.

Социализм Ĕçĕн Геройĕн, Çветтуй Андрей Первозваннăй орденĕн кавалерĕн – Сергей Владимирович Михалковăн – сăввисемпе эпĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçиччен паллашнă. Вырăссен чаплă поэчĕн пултарулăхĕ мана çеç мар, ытти пин-пин çын чунне те тыткăнлать. Ачасем валли çырнă сăввисем уйрăмах чĕрене çывăх. Унăн "Çтаппан пичче", "Мимоза çинчен" хайлавĕсене пĕчĕккисем те, çитĕннисем те юратса вулаççĕ. Пултаруллă çыравçăн юптарăвĕсемпе пьесисем те çав тери чаплă.

С.Михалкова эпĕ пуçласа 1950 çулта Мускавра Чăваш литературипе искусствин эрнинче куртăм. Вăл вĕçленсен банкет пулчĕ. Унта чăваш писателĕсемпе, композиторĕсемпе тата артисчĕсемпе пĕрлех совет культурин чаплă ĕçченĕсем Сергей Михалков, Михаил Бубеннов, Василий Ажаев, Григорий Коновалов хутшăннăччĕ. Залра чăваш тата вырăс сăввисемпе юррисем чылайччен янăрарĕç. Савăнăçлă каçа ертсе пыракан Семен Ислюков Сергей Михалкова сăмах парасси пирки пĕлтерчĕ. Пурте алă çупса ячĕç. Çӳллĕ те яштака иккен вăл – "Çтаппан пичче" пекех. Чăваш литературипе искусствин ӳсĕмĕшĕн черкке çĕклеме сĕнчĕ. Унтан хавхаланса "Икĕ тус" юптарăвне вуласа пачĕ.

Сергей Михалкова иккĕмĕш хут Мускавра 1958 çулта тĕл пултăм. Ача-пăча литературин редакцийĕнче ĕçлекенсен курсĕнче вĕренеттĕм ун чухне. Хĕвеллĕ кунсенчен пĕринче курс ертӳçи çапла пĕлтерчĕ: "Паян пирĕн пата ачасен çывăх тусĕ Сергей Владимирович Михалков килме кăмăл турĕ". Ку хыпар пире çав тери савăнтарчĕ.

Чăнах та, кăштахран пирĕн пата кĕтнĕ хăна пырса кĕчĕ. Кусăлăхпа хăй. Сехете яхăн тус-тăванла калаçрĕ вăл редакторсемпе. "Пирĕн çĕршывра ача-пăча литератури çĕнĕ вăйпа пуянланса пырать. Эпир, совет писателĕсем, çамрăк ăрăва вĕрентсе ӳстерме пĕтĕм вăйхала паратпăр", – терĕ. Юлашкинчен хăйĕн сăввисемпе паллаштарчĕ.

Виççĕмĕш хут Сергей Михалковпа 1970 çулта Мускаврах, РСФСР Писательсен виççĕмĕш съездĕнче, курнăçрăмăр. Мана делегата суйланăччĕ. Иккĕмĕш кунне, пушăн 25-мĕшĕнчи ирхи ларура, Сергей Владимирович сăмах каларĕ. Тепĕр икĕ кунран çĕнĕ правлени пленум ирттерчĕ. Унта С.В.Михалкова Раççей Писательсен союзĕн правлени председательне суйларĕç. Вăл каллех тухса калаçрĕ. Унăн хĕрӳллĕ те хавхаланулла сăмахне делегатсем ырласа йышăнчĕç. Съезд пынă кунсенче эпир, чăваш çыравçисем, вырăссен чаплă поэчĕпе сăн ӳкерттертĕмĕр.

Сергей Владимирович мĕнпе илĕртетчĕ-ха мана? Тĕрлĕ енлĕ таланчĕпе, литература ăсталăхĕ пирки уççăн та тӳррĕн калаçнипе, çырас ĕçе пĕтĕм пурнăçне халалланă çынсемпе хутшăннă чухне хăйне ирĕклĕн тытнипе.

■ **Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ,**
**Чăваш халăх поэчĕ**